1944
ДЕКАБРЬ
24
ВЫРСАРНИКУН
251(6746) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) Обкомĕнче

Вырăнти удобренисем хатĕрлесе хире кăларас тĕлĕшпе уйăхлăх ирттересси çинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕне февралĕн 1-мĕшĕ хушшинче вырăнти удобренисем хатĕрлесе хире кăларас тĕлĕшпе уйăхлăх ирттерме йышăннă. Уйăхлăхра вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттарма районсене пилĕккунлăх заданисем панă.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ хушнă тăрăх, парти райкомĕсемпе райисполкомсен колхозсене хăлех вырăнти удобренисем хатĕрлесе хире кăлармалли пилĕккунлăх заданисем çитерсе памалла. Çак ĕçре ялан ĕçлеме колхозсенче ятарласа уйрăм колхозниксене уйăрмалла, вĕсене туртăм вăйĕ çирĕплетсе памалла, удобренисем хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе ĕçлеме вĕсене кашни кун валли заданисем памалла тата çав заданисене пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать. Тислĕк турттарас ĕçре колхозсемпе колхозниксен ĕнисемпе тата вăкăрĕсемпе анлăн усă курмалла.

Парти райкомĕсемпе райисполкомсене уйăхлăх пуçланиччен колхозсенче колхозниксен пухăвĕсене ирттерме хушнă, çав пухусенче вырăнти удобренисем тырпул тухăçлăхне ÿстерес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ăнлантарса памалла, колхозниксене Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1944 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче «Колхозсенче вырăнти удобренисем пухса хатĕрлемелли тата вĕсемпе усă курмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине паллаштармалла, уйăхлăхра тумалли конкретнăй ĕçсене палăртмалла.

Парти райкомĕсен секретарĕсене ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе панă пилĕккунлăх заданисене мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен кашни пилĕк кунтах ВКП(б) Обкомне пĕлтерсе тăма хушнă.

Тракторсене, комбайнсене тата кăкарса ĕçлемелли инвентарьсене срокчен юсаса çитерер!

Шăхасанти машинно-тракторнăй станци коллективĕ Чăваш АССР-ĕнчи МТС-семпе МТМ-сен мĕнпур трактористсене, трактористкăсене, комбайнерсене, рабочийĕсемпе служащийĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

1944 çул Хĕрлĕ Çар пирĕн Тăван çĕршывăн тăшманĕсене татăклăн çĕнтерни çулталăкĕ пулчĕ. Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ пĕтĕм вăйпа хурса паттăррăн кĕрешнипе пулса пирĕн çĕр фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасалчĕ. Совет государствин чиккисене. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче гитлерла вĕрă-хурахсем ухтавлăн пăснăскерсене. Бисенц тинĕсĕнчен пуçласа Хура тинĕс таранах пур çĕрте те тепĕр хут йĕркелесе çитерне.

Хĕрлĕ Çар халĕ гитлерла Германин пурнăç центрĕсем çине татăклăн тапăнма хатĕрленет. Фашистла тискер-кайăкăн шăтăкне пур енчен те çавăрса илнĕ. Тăшман темĕнле чĕееленсе хăтланса та, вăл пур-пĕрех пĕтсе ларассинчен çăлăнса юлаймĕ.

Паттăр Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă çĕнтерÿсем ĕççыннисен чĕрине калама çук савăнтараççĕ.

Сталин юлташ совет халăхĕн тылри ĕçне, вăл Хĕрлĕ Çара пулăшнине, пысăка хурса хакларĕ. Çулпуç пирĕн ĕçе çавăн пек хаклани пире çĕнĕ вăй парать тата çĕнĕ паттăр ĕçсем тума хавхалантарать.

Халĕ, Хĕрлĕ Çар тăшмана пĕтерсе лартассине çĕнĕрен пырса çапма хатĕрленнĕ вăхăтра, совет халăхĕн хамăрăн çарсене мĕнпур вăйпа пулăшмалла, гитлерла Германие кĕске вăхăтрах çапса аркатассишĕн тата Берлин çине çĕнтерÿ ялавне çĕклесе лартассишĕн кĕрешмелле.

1944 çулта пирĕн МТС коллективĕ начар мар ĕçлерĕ. Çулталăкра тракторсемпе ĕçлемелли плана эпир 119 процент тултартăмăр. 11.900 килограмм горючи перекетлесе хăвартăмăр. Пирĕн МТС колхозсене ял хуçалăх культурисене пысăк тухăçлăхпа туса илме пулăшрĕ.

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладпа тата приказпа хавхаланса, пирĕн МТС работникĕсем 1945 çулта хăйсен ĕçĕнче татах та пысăкрах тĕслĕхсем кăтартма обязательство илчĕç. Çакă вара ни малтан машинăсемпе тракторсен паркĕ лайăх пулнинчен килет. Тракторсемпе ытти машинăсем юсавлă пулмасан, çураки вăхăтĕнче тата ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсенче государство планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме çук. Акă мĕншĕн ĕнтĕ эпир халĕ тракторсемпе комбайнсене тата кăкарса ĕçлемелли машинăсене вăхăтра тата тĕплĕн хатĕрлесе çитересси кашни МТС-ăн тĕп задачи пулса тăрать тесе шутлатпăр.

Ремонт кампанийĕ пуçланнăранпа эпир 33 трактор юсаса кăлартăмăр (çулталăкри планпа 41 трактор юсамаллаччĕ), вĕсенчен 11 тракторне капитальнăй ремонтпа тата 22 тракторне текущи ремонтпа юсанă. Çак тракторсене пурне те государство комиссийĕ тĕрĕслесе йышăннă. Виçĕ бригада — Яким Сергеевăн, Сидоровăн тата Николай Александровăн бригадисем—кăкарса ĕçлемелли машинăсене те пĕтĕмпех юсаса пĕтерчĕç.

Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар умĕнчи хамăрăн тивĕçлĕхе ăнланса тăрса, эпир, Шăхасан МТС-ĕн трактористĕсемпе трактористкисем, комбайнерĕсем, рабочийĕсемпе служащийĕсем, 1945 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне тракторсене юсас, кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсас, комбайнсене юсас ĕçсене пĕтĕмĕшпех вĕçлеме тата вĕсене пысăк пахалăхпа юсама обязательство илетпĕр.

Эпир Чăваш республикинчи машинно-тракторнăй станцисен мĕнпур трактористчĕсене, комбайнерĕсене тата ытти работникĕсене машинăсемпе тракторсен паркне юсас ĕçе срокчен вĕçлессишĕн, МТС-сен машинисене 1945 çулхи çураки валли лайăх хатĕрлесе çитерессишĕн социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнетпĕр.

(Шăхасан МТС-ĕнчи трактористсен, трактористкăсен, комбайнерсен, рабочисемпе служащисен пухăвĕнче йышăннă).

Совет Союзĕ тăрăх

МУСКАВ УНИВЕРСИТЕТĔНЧЕ НАУЧНĂЙ КОНФЕРЕНЦИ ПУЛСА ИРТНĔ

Декабрĕн 27-мĕшĕнче Мускаври Ленин орденлĕ Ломоносов ячĕпе тăракан государство университетĕнче наукăн хальхи ытăвĕсене сÿтсе-явма пухнă конференцин юлашки ларăвĕ пулса иртнĕ.

Конференци 13 кун хушши пынă. Унта академиксем, профессорсем, университет аспиранчĕсем тата союзлă республикăсен паллă ученăйĕсем пулнă.

Конференцире 11 секци ĕçленĕ. Секцисен ларăвĕсенче итленĕ докладсене сÿтсе явас ĕçе столицари наука представителĕсем нумай хутшăннă.

Конференцире университетăн профессорĕсемпе преподавателĕсене наукăллă чи лайăх ĕçсемшĕн М. В. Ломоносов ячĕпе памалли премисене валеçсе панă. (ТАСС).

ЛАТВИ ХРЕСЧЕНĔСЕНЕ ÇĔР ВАЛЕÇСЕ ПАРАÇÇĔ

Латви ССР-ĕнче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем туртса илнĕ çĕре хресченсене каялла тавăрса параççĕ.

Çĕрпе пĕрлех хресченсене çĕре ĕçлесе тăма кирлĕ хатĕрсем тата государствăран кивçен укçа параççĕ. Нимĕçсем туртса илнĕ çĕре каялла тавăрса парасси ... тата çĕнĕрен çĕр касса парасси оккупантсенчен тасатнă уездсемпе вулăçсенче пуринче те пырать. Паянхи куна республикăра 35.000 хресчен хуçалăхĕ çĕр илнĕ те ĕнтĕ. Вĕсене 300.000 гектар ытла çĕр касса панă.

(ТАСС).

КАВКАЗ ЛЕШ ЕНЧИ РЕСПУБЛИКĂСЕНЧИ СОВЕТ МУЗЫКИН ВУНĂКУНЛĂХĔ

Тбилиси хулинче Кавказ леш енчи республикăсенчи совет музыкин вунăкунлăхĕ пуçланнă.

Вунăкунлăх программине Отечественнăй вăрçă кунĕсенче тĕрлĕ жанрсемпе çырнă музыка произведенийĕсем—лирикăллă юрăсенчен пуçласа пысăк симфонисем, ораторисем тата оперăсем таранах кĕреççĕ. Вунăкунлăха Азербайджанри, Грузири тата Армени 1.000 ытла музыкантсем, композиторсем, артистсем, дирижерсем хутшăнаççĕ. Вунăкунлăхра çавăн пекех тата СССР-ти чи паллă музыка деятелĕсем пулаççĕ. Вунăкунлăх вĕçленнĕ хыççăн творчество ыйтăвĕсемпе анлă конференци пулса иртмелле, çав конференцире Азербайджанри, Грузири тата Армени музыка искусствин ыйтăвĕсене сÿтсе-явмалла. (ТАСС).

ШЫВРА ЛАЙĂХ ИШЕКЕН ÇЫНСЕНЕ ПУХСА ВĔРЕНТЕÇÇĔ

Ленинградра, ВЦСПС-ăн хĕлле ишмелли бассейнĕнче, шывра лайăх ишекен çынсем пуçтарăннă. Вĕсем хушшинче—Мускав, Ленинград, Горький, Тамбов представителĕсем.

Пухăннисем шывра ишессин теорийĕпе тата практикипе паллашаççĕ. ишме вĕрентессин методикине тата ăмăртусем ирттермелли правилăсене вĕренеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ малашне треперсем пулса ĕçлемелле. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 22-мĕшĕнче Чехословакире пирĕн çарсем ЛУЧЕНЕЦ хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшманпа çапăçса ВИШНЯ КАЛОША, СОБОТКА, ГУСИНА, ДУРЕНДА, БИЗОФАЛА, ГОСТИЦЕ, ТАМАСВЕЛГИ ялĕсене туртса илнĕ.

Венгрире, ДЬЕНДЬЕШ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕртерехре, пирĕн çарсем КИШ-ТЕРЕЧНЕ хулипе узловой чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, ДИСНОШД, АРЛО, БОРШОДНАДАШД, БАЛАТОН, ПЕТЕРВАШАРА, МАТРАБАЛА, СУПАТАК ялĕсене тата ЯРТАНХАЗА, МАТРАБАЛА чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

Декабрĕн 21-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем ЛУЧЕНЕЦ хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата ДЬЕНДЬЕШ хулинчен çурçĕртерехре нимĕçсемпе венгерсен 1.755 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Декабрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 101 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 68 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире, Лученец хулинчен хĕвелтухăçнерехре, тăшман çĕнĕ вăйсем куçарса пынă та пирĕн наступлени туса пыракан çарсене хирĕç хытă çапăçнă. Пĕр соединенин чаçĕсем кун каçиччен гитлеровецсен тĕреклĕ темиçе пунктне аркатса тăкнă. Çав пунктсене каялла туртса илме хăтлансан тăшман контратакăсем тунă. Хаяр çапăçура нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити вилсе пĕтнĕ, вара гитлеровецсен ирĕксĕрех каялла чакма лекнĕ. Тепĕр районра рядовой Белорусов ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ пĕр паха шоссе çулĕ çине пырса тухнă. Тăшман пехотин икĕ роти тата виçĕ танкĕ пирĕн çав боецсене атакăланă. Белорусов юлташ, танксене пемелли пăшалпа тĕл пере-пере ярса, нимĕçсен икĕ танкне вут тивертсе янă. 3-мĕш танк каялла çавăрнса кайнă. Пулеметсемпе тата автоматсемпе персе, совет боецĕсем нимĕçсен атакине сирсе янă, хăйсен шоссе çулĕ çинче йышăнса тăракан позицийĕсене алăран яман.

* * *

Венгрире пирĕн çарсем, Дьендьеш хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕртерехре тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă. Совет чаçĕсем, тăшмантан аякран иртсе кайса, Киш-Теренне хулинче çирĕпленсе ларнă гитлеровецсене виçĕ енчен пырса атакăланă. Хула урамĕсенче пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн пирĕн подразделенисем нимĕçсен гарнизонне аркатса тăкнă та Киш-Теренне хулине туртса илнĕ. Пĕр чаçри боецсем гитлеровецсене шоссе çулĕсен узелĕ пулса тăракан Петервашара ялĕнчен хăваласа кăларнă. Тепĕр участокра Маньков капитанăн мотоциклетлă батальонĕ тăшман тылне кĕрсе кайнă та нимĕçсен оборонин тĕреклĕ пунктне кĕтмен çĕртен пырса çапнă. Совет боецĕсем гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтерне, 10 тупă тытса илнĕ, 50 нимĕçе тыткăна илнĕ. Часах нимĕç пехотин икĕ батальонĕ, танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем пулăшнипе, пирĕн мотоциклистсене хирĕç контратака пуçласа янă. Пирĕн боецсем тăшман контратакине сирсе янă, нимĕçсен 4 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен 2 туппине пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине ытла выртса юлнă. Каялла чакакан гитлеровецсем пăрахса хăварнă хĕçпăшала тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра Писоцкий капитанăн стрелковăй подразделенийĕ темиçе кун хушши атакăна хатĕрленнĕ. Пирĕн боецсем вăрттăн унăн оборонин малти хĕрри патне çитиччен çулсем чавса тухнă. Çитери хăвăрт пуçланса кайнă атакăран нимĕçсем хăраса ÿкнĕ. вĕсем вара васкасах каялла чакнă. Пирĕн подразделени лайăх позицисем йышăннă та çав вырăнта çирĕпленсе ларнă.

* * *

Нимĕçсен 68-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Рудольф Л. çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ поляк çынни эпĕ ĕлĕкрех поляксен 8-мĕш кавалери дивизийĕнче тăраттăмччĕ. 1939 çулта нимĕçсем патне тыткăна лекрĕм, фашистсен чуралăхĕнчи пур хăрушлăхсене те тÿссе куртăм. Эпĕ нумайччен лагерьте пурăнтăм, çав лагерьте тыткăна лекнĕ çар çыннисем ман куç умĕнчех çĕршерĕн те пиншерĕн пĕтрĕç. Унтан мана нимĕçсен Беттке помещикне чуралăха пачĕç. Çав помещик патĕнче 20 француз тата 6 поляк ĕçлесе пурăнчĕç. Пире унта выçăпа асаплантаратчĕç, хаяррăн хĕнетчĕç, тем тĕрлĕ те мăшкăллатчĕç.

Кăçал кĕркунне нимĕçсен çар влаçĕсем поляксен тата тепĕр ушкăнне нимĕç çарне мобилизацилерĕç. Поляксем нумайĕшĕ нимĕçсен çарне каймасăр тарса пытанчĕç. Гитлеровецсем çавăн пек поляксен çемйисене ним шеллесе тăмасăр пĕтереççĕ. Ман пиччĕе тарса пытанчĕ те мобилизаци тăрăх нимĕçсен çарне каймарĕ. Нимĕç ирсĕрĕсем унăн çемьине тытрĕç те персе пăрахрĕç. Манăн икĕ шăллăм ĕнтĕ 6-мĕш çул нимĕçсен тыткăнĕнче асапланаççĕ. виççĕмĕш шăллăм тĕрмере ларать. Ман юлташсем нумайĕшĕ гестапо тĕрминче пĕтрĕç. Гитлеровецсем поляк халăхне пĕтерсе хурасшăн Польша государствине çĕр çинчен шăлса тăкасшăн. Эпĕ нимĕç захватчикĕсене пĕтĕм чунтан кураймастăп, Гитлер çарĕнче пĕр кун та тăрасшăн пулман. фронта килнĕ чухне икĕ поляк хăйсене хăйсем юри сиенлерĕç, çапла вĕсем госпитале лекесшĕн пулчĕç. Эпĕ урăхла турăм, май килсе тухсанах вырăссен енне каçрăм. Эпĕ, алла хĕçпăшал тытса, хамăн тăван çĕршывăн чи усал тăшманĕсене—нимĕçсене тавăрасшăн».

РУМЫНИЕ ХĂВАЛАСА КАЙНА АЧАСЕНЕ КАЯЛЛА ТАВĂРАÇÇĔ

КИШИНЕВ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Румынирен нимĕçсемпе румынсем оккупациленĕ вăхăтра хăваласа кайнă 6—15 çулхи ачасем каялла тавăрнаççĕ. Вĕсен ашшĕ-амăшĕсене—совет работникĕсене, рабочисене, алăстаççене—персе пăрахнă е концентрациллĕ лагерьсенче асаплантарса вĕлернĕ.

Ачасенчен пĕр пайне чĕрĕ тăрса юлнă тăванĕсем илнĕ, тепĕр пайне ача колонийĕсемпе ача çурчĕсене яраççĕ.

Çитес кунсенче Румынирен Совет ачисен тепĕр ушкăнĕ çитмелле.

ВЕНГРИРИ НАСТУПЛЕНИ

Юлашки кунсенче Венгрин çурçĕр пайĕнче Малиновский Маршалăн çарĕсем хăвăрт наступлени туса пыраççĕ. Вĕсем Венгрипе Чехословаки чикки урлă каçса кайнă та Чехословаки çĕрĕ çинче çапăçаççĕ, çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле наступлени туса пыраççĕ.

Венгрин çурçĕр пайĕнче совет çарĕсем çавăн пек ăнăçлă туни пуринчен ытла çак икĕ условирен килнĕ: Будапештран çурçĕр хĕвелтухăçнерехре тăшман оборонине таткăнинчен тата Гернад шывĕ районĕнче наступлени туса пыракан пирĕн чаçсем хăвăрт малалла куçса пынинчен. Кăнтăр енчен çурçĕрелле çавăн пек пыра-пыра çапнипе пула тăшмана флангран пырса çавăрса илесси хăратма пуçланă та унăн вара Мишкольцпа Шаторалья-Уйхель хушшинчи çул тăрăх выртакан тата Гернад шывĕн хĕвеланăç хĕррипе пыракан тулла-сăртлă рубежсене хÿтĕлеме меллĕскерсене хăвармалла пулса тăнă.

Мишкольц хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах хăвăрт наступлени туса пынипе тата тăшман Чехословакин кăнтăр чикки патĕнче çирĕпленсе ларма ĕлкĕрейменнипе пула, пирĕн çарсем хăш-пĕр участоксенче çав вырăна тăшман чаçĕсенчен маларах пырса çитнĕ. Сендрьо хулинчен çурçĕртерехри районра ак çакăн пек ĕç пулса иртнĕ.

Пирĕн боецсем унта нимĕçсен пĕр дивизийĕн çыхăну тытакан салтакне тыткăна илнĕ. Çав салтак венгерсен сапернăй батальонĕ валли приказ илсе пынă. Çав приказра вăл батальона, стрелковăй подразделени вырăнне кĕрешекенскерне, пăрса Чехословакири Турня хули еннелле чакма, тĕп çулсене хÿтĕлесе пыма хушнă. Анчах та çав нимĕç салтакĕ çитме васкана вырăна пирĕн чаçсем унччен пĕр кун маларах тытса илнĕ. Çак салтака тыткăна илнĕ кун вара пирĕн наступлени туса пыракан чаçсем Турня патне çывхарса пынă. çав приказ тăрăх, сапернăй батальон хÿтĕлемелли çул ун чухне пирĕн алăра пулнă.

Çак ĕç вăл хальхи наступленишĕн питĕ кăтартуллă пулса тăрать. Айккипе хăюллăн ирте-ирте кайса, наступлени тăвакан çарсем тăшмана тусем хушшинче оборонăра тăма май памаççĕ. Тусем хушшинче оборонăра тăма çăмăлтарах пулас вырăнне, унта вĕсемшĕн нумай хăрушлăх пулса тăрать.

Пирĕн чаçсем пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне тăшман кĕперсене сиктерсе яма, Совет чаçĕсене пÿлсе тăракан йышлă юхăншывсемпе каналсем урлă каçмалли вырăнсем умне минăсем лартса хăварма тăрăшать. Анчах та вăл çак ĕçе пур вăхăтра та тăваймасть. Чылай тĕлте пирĕн наступлени туса пыракан подразделенисем кĕперсене тăшман саперĕсем сиктерсе яма хатĕрленнĕ вăхăтра тытса илнĕ.

Сентеев капитан хăйĕн подразделенийĕн çулĕ çинче выртакан виçĕ кĕпере нимĕçсем сирпĕнтерсе яма хатĕрленни çинчен пĕлнĕ. Сентеев хăйне пĕрле пĕр ушкăн сапер илнĕ те çав кĕперсен районне кайнă. Çăра тĕтрепе усă курса, саперсем çав кĕперсем патне вăрттăн пырса тухнă та вĕсен хуралне тапăннă. Нимĕçсемпе венгерсем вара тарнă.

Саперсем кĕпере çавăнтах минăсенчен тасатма пуçланă. Вĕсем çак ĕçе тăшман кĕперсене вăйлăн пеме тытăнсан та пăрахман. Унтан вĕсем оборона йышăннă та ăна пирĕн пехота пырса çитиччен хăйсен аллинче тытса тăнă. Çапла вара çав кĕперсене çăлса хăварнă.

Нумай участоксенче çапăçусем питĕ хаяррăн пыраççĕ. Вăйлă персе хирĕç тăнипе çĕр пуçне, тăшман тата контратакăсем тăвать. Гернад шывĕ улăхĕнче уйрăмах вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Унта пирĕн наступлени туса пыракан чаçсем Венгрипе Чехословаки чикки урлă каçса кайнă та çурçĕр-хĕвеланăç еннелле ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ. Кошице хули патне кăнтăр енчен тата хĕвеланăç енчен пыракан çулсене татаççĕ.

Иполь шывĕ улăхĕнче. çав шывăн хĕвеланăç енчи юппи патĕнче ĕлĕкхи пекех питĕ вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Çĕнĕ вăйсем илсе пырса, тăшман Иполь шывĕн çурçĕр хĕррипе пирĕн çарсен наступленине кирек мĕн пулсан та чарса лартма тăрăшать. Нимĕç командованийĕ çав района çарсен ятарласа тунă ушкăнне янă, çав ушкăна танксем тата бронетранспортерсем панă.

Венгрин çурçĕр пайĕнче тата Чехословакин кăнтăр енчи районĕсенче наступлени малалла пырать.

И. ЛАПОНОГОВ.

ÇАПАÇУРИ ÇАР, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ).

Пруссин çĕрĕ çинчи сывлăшри çапăçу

«Яковлев» йышши тăватă самолет, гварди капитанĕ Петр Лобас ертсе пынипе, Хĕвелтухăç Пруссие вĕçсе кайнă.

Тăшман тылĕнчи чугун çул магистралĕ патне пырса çитнĕ çĕре совет самолечĕсене пĕлĕтсем хушшинчен тухса «Мессершмитт—109» йышши самолетсен пысăк ушкăнĕ тапăннă.

Совет летчикĕсен кашни мăшăрĕн тăватă фашистпа кĕрешмелле пулнă. Гварди капитанĕ Лобас пĕр «Мессершмитта» пулеметпа вăрăм черет персе ярса, вут хыптарнă. Гитлерла ытти летчиксем çав вăхăтра Лобаса тапăннă. анчах вĕсене гварди лейтенанчĕ Николай Тепин хăваласа янă.

Гвардин старши лейтенанчĕ Александр Калугин çĕнтерĕве татса параканни пулнă. Ăна хăйне унăн юлташĕ гварди лейтенанчĕ Иван Батарин хÿтĕлесе тăнă. Калугин сисмен хутран «Мессершмитт—109» самолет хыçне вĕçсе тухнă та ăна персе ÿкернĕ.

Гварди капитанĕ Б. КОТЕЛЬНИКОВ.

ХĔВЕЛТУХАÇ ПРУССИ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ).

БЕЛОРУССИРЕН НИМĔÇСЕМ ХĂВАЛАСА КАЙНА ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХЕ КАЯЛЛА ТАВĂРАÇÇĔ

Вăрçă вăхăтĕнче нимĕçсем Белоруссирен хăваласа кайнă выльăх-чĕрлĕхĕн пĕрремĕш ушкăнĕ каялла таврăннă. Ăна тăшмантан Хĕрлĕ Çар туртса илнĕ. Минск, Могилев тата Витебск облаçĕсенчи колхозсене 306 ĕнепе вăкăр янă та ĕнтĕ. Çавăн пекех тата 600 лаша. 279 тиха килсе çитнĕ. (ТАСС).

ФРОНТРИ ТЕАТРСЕН СМОТРĔ ВĔÇЛЕННĔ

Мускавра фронтри театрсен смотрĕ вĕçленнĕ. Юлашки кун «Ленин» ятлă спектакль кăтартнă (ăна Погодинăн «Человек с ружьем» ятлă пьеси тăрăх çырнă). Çав театрсем хăйсен чи лайăх постановкисене, вăл шутра Островскин «Не все коту масленица», «Не в свои сани не садись» ятлă комедийĕсене, «Где то в Москве» ятлă обозрени тата «Бравый солдат Швейк» ятлă комеди кăтартнă. Смотра çавăн пекех Пĕчĕк театрпа Вахтангов ячĕпе тăракан театрсен фронтри филиалĕсем те хутшăннă. Смотрта пулнă постановкăсене кашниех фронтра 500—600 хутран кая мар кăтартнă. Çывăхри кунсенче театрсем фронтсене тавăрнмалла. (ТАСС).

ЧАССР СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ОБКОМĔН КУÇСА ÇÛРЕКЕН ХĔРЛĔ ЯЛАВНЕ ИЛНĔ ВОРОШИЛОВ ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН КОЛХОЗРА (ЕЛЧĔК РАЙОНĔ)

Ÿкерчĕк çинче—султе, сулахăйран: 1) колхозницăсем кÿлме вĕрентнĕ вăкăрсемпе уя тислĕк турттараççĕ; 2) вăрлăхлăх тырăсене триерпа сортлаççĕ; 3) колхозри машинăсене лартма сарай тăваççĕ. Аялта: 1) колхозри сурăхсене пăхакан П. И. Емельянов юлташ. Вăл 97 сурăхран 128 путек çитĕнтерне. Кашни сурăхран 3.12 килограмм çăм касса илнĕ; 2) Колхозри агитатор Якимов Сталин юлташăн докладне колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса парать; 3) колхозри агротехник Л. Лесников юлташ колхозниксене вăрлăх валли çĕрулми тăррипе мĕнле хатĕрлемеллине вĕрентет; 4) колхозри чи лайăх конюх Н. Е. Овчинникова юлташ.

С. ФРИД фотомонтажĕ.

Çуракине большевикла кĕтсе илер!

Пирĕн коллектив тракторсене юсаса пĕтерчĕ

Тракторсем колхозсенчен килсе тăнă май, вĕсене эпир юсама тытăннă. Мастерскойне килнĕ тракторсене çавăн чухнех пăсса, мĕнле пайсем çитменнине, хăш пайне çĕнетме кирлине палăртса пынă.

Тракторсене юсас ĕçсем пĕр чăрмавсăр пулса пыччăр тесе, кăçалхи юсав ĕçне эпир мĕн çулларанпах хатĕрленсе пынă. Тракторсен пайĕсене çийĕнчех тупса хатĕрлесси—пысăк ĕç. Çавăнпа та МТС дирекцийĕ ку тĕлĕшпе мĕнпур майсемпе усă курма тăрăшрĕ. Ялхуçалăх машинисене юсас ĕçре хуласенчи заводсем пысăк пулăшу пама пултарнине те шута илнĕ. Горький, Ленинград, Хусан хулисенчи заводсенчен эпир тракторсем валли кирлĕ пайсем чылай илсе килтĕмĕр. Тракторсен поршенĕсене, тĕрлĕ подшипниксене, газ пайлакан валсене, коленчатăй валсене, головкăсене тата ыттисене те хуласенчи заводсенчен илсе килтĕмĕр. Анчах çав вăхăтрах эпир чылай пайсене хамăр патăртах, мастерскойĕнче туса хатĕрленĕ. Гайкăсемпе болтсене 14.430 штука, вентилятор тĕнĕлĕсем 14, вăтам втулкăсем 9, малти втулкăсем 8, регулятор втулкисем 17, регулятор валикĕсем 15, çаклатмалли дисксем 29 тата ыттисене те туса хатĕрленĕ. Мĕн пуррине шутласан, МТС мастерскойĕнче тĕрлĕ пайсене 700 ытла çĕнĕрен тунă, 13.500 тенкĕлĕх ытла кивĕ чаçсене урăхлатса çĕнетнĕ.

Юсас çĕрте кирлĕ пайсене малтанах хатĕрлесе хунине пула, ăнăçусем чăнах та начарах пулмарĕç. График тăвиччен 6-мĕш бригадăн трактористчĕсем ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне икĕ трактор юсаса кăларнă. Ун хыççăн 7-мĕш бригада икĕ трактор, 5-мĕш бригада пĕр трактор юсанă. Вĕсем хыççăн ытти бригадăсенчи трактористсем те харпăрхăйĕн тракторĕсене юсама тытăнчĕç. Ноябрĕн вуннăмĕшĕ тĕлне 11 трактора лайăх пахалăхпа юсаса кăларнă. Егоров юлташ бригадинчи тракторист М. Степанов 31-мĕш номерлĕ трактора планпа палăртниччен 7 кун малтан юсаса пĕтерчĕ. Комисси унăн тракторне лайăх юсанă тесе йышăнчĕ. Павлов юлташ бригадинчи Арсентьева 10-мĕш номерлĕ трактора вунă кун малтан юсаса кăларчĕ. Ульяна Николаева бригади районри колхозниксем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать. Унăн бригадинчи трактористсем пурте çулталăк планне ирттерсе тултарнă. Халĕ бригада çине тăрсах çуракине хатĕрленет. Бригадăри виçĕ трактора лайăх пахалăхпа юсанă. Ольга Мефодьева, Клавдия Кондратьева, Татьяна Николаева юлташсем хăйсен тракторĕсене 10 кун малтан юсаса пĕтерчĕç. Тракторсемпе пĕрлех плугсене те юсанă. МТС коллективĕ декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 38 трактора лайăх пахалăхпа юсаса, тракторсене юсас ĕçе вĕçлерĕ.

Калас пулать, ĕçре йывăрлăхсем нумай пулчĕç. Эпир вĕсене çĕнтертĕмĕр. Машинно-тракторнăй мастерскойĕнче (ăна вăрçăн йывăр кунĕсенче хамăр вăйпа тунă) кунĕн-çĕрĕн ĕç вĕресе тăчĕ. Мастерской заведующийĕ коммунист Павлов юлташ тата МТС механикĕсем мастерскойран тухма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Вĕсем трактористсене ĕçре пулăшса пынă, калаçусем ирттернĕ. Çитмен пайсене мастерскойĕнчех туса хатĕрленĕ. Мастерской заведующийĕ Павлов юлташ сахал мар рационализаторла сĕнÿсем панă. Вăл сĕнÿсене нумайĕшне пурнăçланă. Унăн паллă сĕнĕвĕсенчен пĕрне çакна илсе кăтартма пулать. 5 тракторăн хăвăртлăх коробкисенчи вăтам валсем çиĕнсе пĕтнĕччĕ. Валăн пуçне тăхăнтартакан флянец та çийĕнсе юрăхсăра тухнă. Павлов юлташ вал çине флянец тăхăнтарса, хĕртсе çемçетрĕ, унтан виçĕ çĕртен тăрăхла шăтарса, шпон çапса лартрĕ. Флянец тухса каясран, шайба хурса гайкăпа хытарса хунă. Çавăн пек валсемпе эпир 5 трактора юсарăмăр.

Çапла эпир, юсамалли пайсене хамăр патăртах, хамăр алсемпе туса пырса, тракторсене юсамалли 4-мĕш квартал планне ноябрĕн 23-мĕшĕ тĕлне ытлашшипех тултартăмăр. 16 трактор вырăнне 18 трактор юсаса кăлартăмăр.

Çакна аса илес килет. Кăçалхи çул трактористсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, иртнĕ çулхинчен лайăхрах тата ик-виçĕ хут хăвăртрах ĕçлерĕç. Иртнĕ çулта пирĕн МТС тракторсене юсамалли çулталăк планне январĕн 6-мĕшĕнче тултарнăччĕ. Кăçал иртнĕ çулхинчен 16 кун маларах пĕтĕм тракторсене юсаса пĕтертĕмĕр.

Вăтамран илсен, кашни 5 кун хушшинче 4 трактор юсанса тухнă. Тракторсене хăвăрт юсасси ку ĕçе плугарьсемпе машиноведсене явăçтарнинчен те килчĕ. Вăтамран шутласан, тракторсене юсанă çĕрте кулленех 90—100 çынна яхăн ĕçленĕ.

МТМ-ăн чи лайăх ĕçлекен слесарĕ М. Гурьев юлташ хăйне панă заданисене яланах срокра пурнăçласа пычĕ.

Тракторсене юсанă вăхăтра рабочисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе те чăтăмлăн туса пынă. Сталин юлташăн историллĕ доклачĕпе приказне вĕрентнĕ. Çулпуçăн чĕрене хаваслантаракан сăмахĕсем трактористсемпе трактористкăсене ĕçре çитĕнÿсем тума хавхалантарса пычĕç. Тракторсене юсас ĕçре социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пычĕ.

Эпир тракторсене срокчен юсаса пĕтерме рабочисем валли мĕн кирлине туса патăмăр. Ĕç вăхăчĕпе туллин усă курас тесе, ятарласах МТС-ра столовăй уçрăмăр. Рабочисем апат çиме çÿресе вăхăта нумай сая яни пулман.

Пĕр-ик сăмах кадрсем пирки. Кадрсем хатĕрлесси—калама та çук пысăк ĕç. Çавна шута илсе, халь 35 çамрăка трактористсен курсĕнче вĕрентетпĕр. Кусемсĕр пуçне, 5 çын Канашри механизаторсен шкулĕнче вĕренеççĕ тата плугарь пулса ĕçленĕ 15 çынна трактористсем пулма вĕрентсе хатĕрленĕ.

Хальхи вăхăтра эпир ялхуçалăх машинисене юсатпăр, çак кунсенчех комбайнсене юсама та тытăнатпăр.

А. КОНСТАНТИНОВ.
Красноармейски МТС директорĕ.
М. АФАНАСЬЕВ.
Старши механик.

УРАЛТА ГЕОЛОГИ ОБЩЕСТВИ ОРГАНИЗАЦИЛЕНЕ

Свердловскри сăрт-ту институчĕн геологи музейĕ çумĕнче Уралти геологи обществине организациленĕ. Обществăн задачи — Уралти çĕр айĕнче выртакан пуянлăха тĕпчесе тупса, унпала усă курасси пулать. Общество Уралти паллă геологсене пĕрлештерсе тăрать. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ÇĔНĔ ЙЫШШИ ПАНУЛМИСЕМ

Мичурин учениĕсенчен пĕри—ялхуçалăх наукисен докторĕ профессор С. Черненко СССР Агат-çимĕç промышленноçĕн Халăх Комиссариатĕнче [illegible] панулми нумай паракан çĕнĕ йышши улмуççи ÿстерни çинчен пĕлтернĕ. [illegible]

ЗАВОДРИ ШАХМАТ ТУРНИРĔ

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра шахмат турнирĕ пуçланнă. Турнире пурĕ 20 çын ытла хутшăннă.

ПАРТИ ШКУЛĔСЕМ

Республикăри районсенчи парти кабинечĕсене парти шкулĕсем ĕçлеме пуçланă. Шкулсене районсенчи предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем, колхозсен парторганизацисен секретарĕсем «ВКП(б) историйĕн Кĕске курсне», Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи çинчен» кĕнекине вĕренеççĕ.

ТРАКТОРИСТСЕН КУРСĔ

Пĕрре [illegible] МТС-ĕнче трактористсен курсĕ ĕçлеме пуçланă. Курсра пурĕ 35 çын вĕренет. Вĕсенчен 15-шĕ хĕрарăмсем. Курсра виçĕ уйăх вĕренеççĕ.

ВĔРЕНЕКЕНСЕН АШШĔ-АМĂШĔСЕНЕ ШКУЛ ПУРНĂÇĔПЕ ПАЛЛАШТАРНИ

Куславкка районĕнчи Чашламари çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ пулса иртнĕ. [illegible]

Ÿкерчĕк çинче: ватă учитель Г. А. Корельков юлташ. Вăл И. А. Крыловăн басниĕсене чăвашла чи малтан куçарнă.

ФОЛЬКЛОР ПУХĂÇÇĔ

Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Кипеки вăтам шкулта халăх хушшинче Отечественнăй вăрçă çинчен халăх фольклорне пухассине тытăннă. Ку тĕлĕшпе вĕренекенсем В. Николаева, П. Сергеева, Л. Порфирьева юлташсем уйрăмах тăрăшса ĕçлеççĕ. Халĕ вĕсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи фольклора 5000 строка ытла пухнă.

Фронтовиксен çемйисемпе вăрçă инвалидĕсене пулăшассĕ

Фронтовиксен çемйисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пулăшас ĕçре [illegible]

Н. МОИСЕЕВ.

Маяксем лартрĕç

ОКТЯБРЬСКОЕ. [illegible] (председателĕ С. Журавлев) [illegible] çташчăр тесе, Наратчаккри ял Совечĕ [illegible]

И. АНДРЕЕВ.

ТАВАТĂ АЧА ÇУРАТНĂ

Бийскри паровоз деповĕнче (Алтай крайĕ) ĕçлекен кочегарăн арăмĕ Евдокия Абрамовна Иванова нумай пулмасть тăватă ача çуратнă. Амăшĕпе ачисен сывлăхĕ лайăх. Вĕсене пăхма врач тата медицина сестрине уйăрнă. Хулари организацисем çав ачасен амăшне нумай тĕрлĕ парнесем панă (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 22-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Моншау хули таврашĕнче союзниксен çарĕсем тăшманăн вăйлах мар темиçе атакине сирсе янă, ку районра союзниксем çĕнĕрен темиçе пĕчĕк хула туртса илнĕ. Нимĕçсен наступлени туса пыракан чаçĕсен çурçĕр флангĕнче союзниксем тăшман малалла каяссине чарса лартнă. Ставло хулине каллех туртса илнĕ, халĕ çапăçусем Мальмеди хулишĕн пыраççĕ.

Тăшман союзниксен аллинче тăракан Сен-Вит хули енчелле çавăрса илмелле наступлени туса пынă, анчах та союзниксен çарĕсем тăшман малалла каяссине вăйсăрлатнă. Виандер хулинчен хĕвеланăçнелле наступлени туса пыракан тăшман чаçĕсем Вейц хулинчен хĕвеланăçнерехри пункт патне çитнĕ, ку районран 6 миля çурçĕртерехре кĕрешекен тăшман чаçĕ Клеверо тулашне çитнĕ.

Эхтернах районĕнче çаплах çапăçусем пыраççĕ, унта союзниксен çарĕсем тăшмана Эхтернах хулинчен тата ун таврашĕнчи ытти хуласенчен те хăваласа кăларнă.

Саар шывĕ улăхĕнче союзниксен çарĕсем Диллинген хулине тăшмантан тасатнă. Вогез тăвĕсен районĕнче кăштах малалла кайнă.

Çанталăк начар тăнă пирки авиаци вăйлă кĕрешме пултарайман. Декабрĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксем Кельн хулинчи тата Бонн хулинчи сортировка станцийĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 22-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Италире 8-мĕш армири Канада чаçĕсем Баньякавалло хулинчен çурçĕртерехре наступлени туса пырса, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе тăкнă. Навильо каналĕ çинче тăшмана тапăнма тунă укреплениран малалла куçса кайнă. Фузиньяно хули тĕлĕнче сарлака фронтпа Сенио шывĕ çине пырса тухнă. Баньякавалло хулине йышăннă. 5-мĕш арми секторĕнче патрульсем вăйлă кĕрешнĕ.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер Германири Розенгейм хулинчи чугун çул объекчĕсене, Югославири çулйĕрсене тата тăшман транспортне тапăннă.

Францин консультаци ассамблейи Совет Союзĕпе Франци хушшинчи договора ырланă

ПАРИЖ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх консультаци ассамблейин ларăвĕнче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Жорж Бидо хыççăн Марсель Кашен тата Поль Бонкур сăмах тухса каланă. Вĕсем Совет Союзĕпе Франци хушшинчи договора ырланă. Социалистсен партийĕ ячĕпе Андре Филипп сăмах тухса каланă, вăл та договор тунине ырланă. Çавăн пекех тата Пьер Кот, тăшмана хирĕç тăракан наци совечĕн представителĕ Мюттер тата ыттисем те сăмахсем тухса каланă. Председатель ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕ тăратнă резолюцие вуласа панă, унта консультаци ассамблейи Вăхăтлăх Правительствăна шанни çинчен каланă. Çавăн хыççăн де Голль генерал сăмах тухса каланă та вара çав резолюцие йышăннă. Резолюцире çапла каланă: «Франципе СССР пĕр-пĕринпе союзлă договор тунăшăн консультаци ассамблейи Франци республикин Вăхăтлăх Правительствин пуçлăхне тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрне тав тăвать. Ассамблея вăл договора пĕтĕмĕшпех ырлать. Хальхи вăрçа ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе тата ушкăнлă хăрушсăрлăх тăвас ĕçре паллă вырăн йышăнса тăракан çак договор çумне çавăн йышши урăх пактсем те тусан лайăх пулнă пулĕччĕ, тесе шутлать ассамблея. Çапла туни Франци пĕрлешÿллĕ ытти Нацисемпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартса тăнă пулĕччĕ, çав пактсем пулас мирпа хăрушсăрлăх организацийĕсен ĕçре пит кирлĕ тапхăр пулса тăнă пулĕччĕç.»

ДЕ ГОЛЛЬ ГЕНЕРАЛ КОНСУЛЬТАЦИ АССАМБЛЕЙИН ЛАРĂВĔНЧЕ ТУХСА КАЛАНИ

ПАРИЖ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, консультаци ассамблейин ларăвĕнче Франципе Совет Союзĕ хушшинчи договор çинчен де Голль генерал сăмах тухса каланă.

«Договор тăрăх—тенĕ вăл,—СССР-па Франци тата ĕçлĕ çĕнтеричченех тăшмана хирĕç вăрçма пулаççĕ. Германие çĕнтерне хыççăн вара вĕсем, Германи ыттисене сиен кÿме ан пултартăр тесе, тивĕçлĕ мерăсем йышăнма пулаççĕ. Çак договор ыранхи Европăн йĕркисене туса хурас тĕлĕшпе пĕрле пĕрлешсе ĕçлеме хатĕр пулнине палăртса тăрать. Паллă, пур вăрçăсем те Германи пирки пулса иртеççĕ, вĕсем йывăртарах тата вăрăмрах пулса пыраççĕ. Çав вăрçăсен хăрушлăхĕ чи малтан Совет Союзĕпе Франци тивет. Франципе СССР пĕр-пĕринпе союзлă пурăннă чухне вĕсем вăйлă пулаççĕ, пĕр-пĕринпе çыхăнман чухне, вĕсем хăрушлăхра тăраççĕ».

«Географипе этем ăсĕ енчен пăхсан, — тенĕ де Голль,— икĕ çĕршыв хушшинчи çав договора тумаллах пулнă. Халăхсен реализмĕ ытти халăхсене кăмăллассине хирĕç пымасть, çав кăмăлăн тымарĕсем истори авалтăхĕнчех пуçланаççĕ. Çавăнпа усă курса, халăх инстинкчĕ нацин тĕп туртăмне палăртать. Мускав договорне тума ăстăн хушнă пулин те, кунта туслăх пулман тесе калама май çук».

Вырăс халăхĕ çав тери паллă çитĕнÿсем тунине палăртса тата унăн руководителĕсене, чи малтан Сталина, пысăк хак парса, де Голль çапла каланă: «Договор çине алă пуснă çĕршывсем, тăшмана çĕнтерес ĕçе хăйсемпе пĕрле хутшăннă ытти нацисем пулăшмасăр, пуласлăх çинчен шутлама пултарайманни курăнсах тăрать. Вĕсемпе те договорсем туни кирлех. Великобританипе унăн доминионĕсем, пĕрлехи тăшмана хирĕç пирĕнпе пĕрлех тухнă скерсем, пире аркатса тăкесрен те пăрахма шутламарĕç. Çав çĕршывран килнĕ çарсем ентĕ Франци çĕрне ирĕке кăларчĕç. Çавăнпа та Лондонпа союз тумасăр, Франци інтерессi çинчен те, хăрушсăрлăх организацилесси çинчен те шутлама пултараймасть.

«Нимĕçсем çĕмĕрсе кĕрсе оккупацилениччен хур курнă ытти халăхсемпе те, — тенĕ малалла де Голль, — пирĕн хăйне уйрăм çыхăнусем пур. Пире те, пирĕн çурçĕрти тата хĕвелтухăçĕнчи кÿршĕсене те стратегиллĕ тата экономикăллă килĕшÿсем кирлине опыт лайăх кăтартса пачĕ. Çавăн пек пĕтĕмĕшле организаци тунă çĕрте Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хутшăнмасăр тăрса юлма пултараймаççĕ. Америкăсăр пуçне çĕнтерÿ те пулман пулĕччĕ. Хăй пулăшма пултарнă таран Франци пĕтĕмĕшле ĕçе пулăшма пулать. Анчах та çав договор çине алă пуснă пирки савăнса, пирĕн умра тăракан йывăр ĕçсене тумалли çинчен манмалла мар. Тăшмана аркатса тăкайманнине пирĕн манма юрамасть. Событисем çакна та кăтартса пама пултараççĕ: Францисĕр пуçне, тен çĕнтерме те çук пулĕ. Çак тĕлĕшпе, ыранхи задачăсене татса парас тĕлĕшпе те, хăй тумалли ĕçсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе те Франци мĕн кирлине пĕтĕмпех тума пулать».

Грецири лару-тару

ЛОНДОН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 21-мĕшĕнче каçхине Афинăра çапла пĕлтернĕ: пилĕк кун каялла Скоби генерал панă ультиматум çине ЭЛАС-ăн Центральнăй Комитечĕ ответ паман-ха, тенĕ. Декабрĕн 21-мĕшĕнче союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнăй штабĕ çумĕнчи министр-резидент Макмиллан главнăй штабпа калаçнă хыççăн Афины хулине таврăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Англи çарĕсем Афины хулинче паян хулана партизансенчен тасатса пынă. Пирейре Англи çарĕсем доксен районĕнчи ЭЛАС партизанĕсене хирĕç çапăçнă. Англи çарĕсем, десант баржисем çине ларса, Пирей портне кĕрсе кайнă та çыран хĕррине танксем кăларса лартнă, халĕ малалла куçса пыраççĕ. Склад сурчĕсенче çирĕпленсе ларнă ЭЛАС партизанĕсем акăлчансен ытти чаçĕсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ.

Афины хулин кăнтăр енчи тулашĕнче тăракан ЭЛАС партизанĕсем, хăйсене хупăрласа илме парас мар тесе, çурçĕрелле куçма тăрăшаççĕ. Англи çарĕсем тĕрмене йышăннă. Скоби генерал партизансене хирĕç вăйлăн кĕрешме пуçласси çинчен приказ кăларнă хыççăн ЭЛАС тупписем Афины хулинче пĕрре те персе курман.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, японецсем Лейте утравĕ çинче хирĕç тăма пăрахнă. (Лейте—Филиппин утравĕсем хушшинче). Японецсен халь пĕр-пĕринчен татăлса кайнă уйрăм чаçĕсем çеç çапăçаççĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ЯПОНИЕ ТАПАННИ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтернĕ: паян американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ, Мариан утравĕсем хушшинчи Сайпан утравĕ çинчен вĕçсе хăпарса, Японири Хонсю утравĕ çинчи промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ТОКИО, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Японецсен император ставки çапла пĕлтернĕ: паян кăнтăрла иртсен американецсен «Б-29» йышши 100 бомбардировщикне яхăн, Мариан утравĕсем çинчен вĕçсе хăпарса, Нагое хулине тата Японин ытти хăшпĕр районĕсене тапăннă.

„Сеятель“ колхоз кашни гектартан 5 центнер клевер вăрлăхĕ мĕнле майпа туса илнĕ

Советски районри «Сеятель» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем курăк акса тунин мĕнле усă пама пултарнине лайăх ăнланса илнĕ. Вăл колхоз кашни çулах гектартан 3—5 центнертан кая мар клевер вăрлăхĕ туса илет. Вăл курăк вăрлăхне хăй валли кăна мар, ытти колхозсем валли те тăвать, государствăна та чылай парать. 1944 çулта çак колхоз 6 гектар çинче 28 центнер таса клевер вăрлăхĕ туса илнĕ.

Курăк акса пусуçаврăнăшне тĕрĕс тытса пынине пула, колхоз Отечественнăй вăрçăн йывăр вăхăтĕнче те артель хуçалăхне çирĕплетсе тата çĕршывпа фронта ялхуçалăх продукчĕсем ытларах парса пыма, колхозниксен пурнăçне пĕрмаях лайăхлатса пыма пултарнă.

58 хуçалăхран тăракан «Сеятель» колхозăн пĕтĕм çĕрĕ 282 гектар шутланать. Вăл шутран—237 гектар сухалама юрăхлă çĕр. Курăк акса тума пĕлнипе колхоз нумай усă курать. Отечественнăй вăрçă пынă çулсенче колхоз государствăна 8.285 пăт тырă панă, вăл колхозри кашни кил 143 пăт тырă панине пĕлтерет. Кунсăр пуçне, колхоз государствăна 3.760 пăт çĕрулми 380 пăт аш-какай тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене те панă.

Юлашки тăватă çул хушшинче колхоз, вăтамран шутласан, кашни гектар пуçне 15 центнертан кая мар тĕштырă туса илнĕ, 1944 çулта унтан та ытларах, гектар пуçне 17 центнер илнĕ. Çулленех утă нумай туса илсе, колхоз выльăх ĕрчетес ĕçе ăнăçлăн туса пырать тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне те ÿстерет.

1944 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана колхоз ытлашшипех тултарнă. Колхоз ферминче планпа шутласа хунă 46 ĕне вырăнне—55 ĕне, планпа палăртнă 40 сысна вырăнне—65 сысна, 75 сурăх вырăнне—81 сурăх пур. Кунсăр пуçне, 1945 çулшăн аванс шучĕпе государствăна 15 сысна самăртса панă. Вăрçă вăхăтĕнче колхоз кашни çулах, вăтамран шутласан, 100 кĕсре пуçне 92 тиха ÿстерет. Çав хушăрах Хĕрлĕ Çара 50 лаша панă, ирĕке кăларнă районсене 4 лаша янă.

Апла пулин те, паянхи куна колхозра планпа шутласа хунă 51 лаша вырăнне 61 лаша шутланать. Лашасемпе ытти выльăх валли утă та, ытти выльăх апачĕ те çителĕклĕ хатĕрленĕ. Колхозри 58 килте мĕнпурĕ те пĕр хуçалăхра кăна ĕне çук, ыттисем пурте ĕнеллĕ.

«Сеятель» колхозăн çак ăнăçлăхĕсем вĕсем курăк акса тунипе таччăн çыхăнса тăраççĕ.

Асăннă колхоз клевер вăрлăхне ăнăçлăн туса илессине мĕнле майпа организациленĕ-ха?

Клевер вăрлăхĕ тумалли участока колхоз уйхир бригадисем çумне çирĕплетнĕ. Вăрлăхлăх акнă клевера пăхма уйрăм колхозниксене хушнă. Çапла тунипе клевер вăрлăхĕ туса илес ĕçре обезличкăна пĕтернĕ.

1944 çулта В. П. Павлов юлташ бригади 2,5 гектар çĕр çинче 10 центнер клевер вăрри, е кашни гектартан 4-шар центнер клевер вăрлăхĕ туса илнĕ. Я. И. Маслов бригади 3,5 гектар çинче—18 центнер клевер вăрлăхĕ, е гектартан 5,1 центнер туса илнĕ.

«Сеятель» колхозра тахçантанпах клеверăн пĕр вăрлăхне акаççĕ. 1927 çултанпах, коллективизаци ĕçĕ пуçланиччененех, Чемей хресченĕсем клевер акса хăварнă пулнă. Чемейре «Сеятель» колхоза организациленĕ хыççăн, колхоз фондне хресченсем çав вăрлăха хывнă пулнă. Çавăнтанпа ĕнтĕ колхоз кашни çулах çав вăрлăха акса клевер туса илнĕ. Нумай çул хушши пĕр вăрлăх акса тунине пула, клевер вăрлăхĕ вырăнти çĕре хăнăхса çитнĕ.

ВКП(б) Обкомĕпе бюровĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ «Чăваш АССР-чи колхозсенче выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе лайăхлатасси çинчен» 1944 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче йышăннă постановленире: республикăри колхозсем хăйсене кирлĕ курăк вăрлăхĕсене хăйсемех тумалла, тесе каласа хăварнăччĕ. Çак кăтартăва «Сеятель» колхоз ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Вăл колхозри клевер вăрлăхĕ, тахçантанпах акса тунипе çĕре хăнăхса çитнĕ пирки, лайăх тухăçлăх парать.

Клеверпа люцернăн пĕр йышши вăрлăхне нумай вăхăт хушши акса тунин тĕслĕхĕсем пирĕн республикăри ытти колхозсенче те пур. Наркомземăн, Госсортфондăн, райçĕрĕç пайĕсемпе селекци станцийĕн нумай вăхăт хушши пĕр çĕрте акса тăвакан çавăн йышши вăрлăха шута илес пулать, ăна ытти колхозсене те туянтарас пулать.

Клевер вăрлăхĕ тумалли участоксене «Сеятель» колхоз курăка çулас умĕн мар, çуркунне пулсанах уйăрса хурать. Ытти колхозсенче те вăл ĕçе çавăн пекех тумалла. Вăрлăхлăх палăртнă участоксене курăк пит йăвă ÿснĕ çĕрте мар, сайрарах ÿснĕ вырăнта уйăраççĕ. Кашласа ÿсекен клевер ÿкме пултарать, шăркана та çавăн пирки начар ларать. Ку колхозра вăрлăхлăх ÿстермелли участока пĕр пекрех ÿсекен, йăвă та мар, сайра та мар ÿсекен вырăнсене суйласа илеççĕ. Кунсăр пуçне çак колхозра вăрлăхлăх хăварнă участокри çакăн пек ĕç туса ирттереççĕ: июнь уйăхĕ пуçламĕшĕнчех, клевер 20—25 сантиметр таран ÿссенех, ăна тĕллĕн-тĕллĕн çумласа сайралатаççĕ. Тин ÿсме пуçланă клевера çумласа сайралатнине пула, клевер ирĕклĕн ÿсме пултарать. Сайралатнă курăк çĕре ÿкмест, шăркана лайăх ларать, унăн вăрлăхĕ те вара ытларах тухать.

Клевер вăрлăхĕ пултăр тесен, клевер çинчи пыльца пĕр курăк çинчен теприн çине куçмалла. Çавăн пек ылмашуллă опылени пулмасан, вăрлăх та ÿсме пултараймасть. Çак ĕçе пыл хурчĕсемпе сăпсасем пыл илнĕ чухне, пĕр чечек çинчен теприн çине куçса, тăваççĕ. Вăрлăхлăх акнă клевер участокĕсем çине çак колхозра кашни гектар пуçне 3—4 вĕлле уйăрса лартаççĕ. Малтан пыл хурчĕсене клевер чечек шăршиллĕ сахăр çитерсе хăнăхтараççĕ, вара вĕлле хурчĕсем, клевер çинче вĕçсе çÿресе, унăн чечекĕсене опылени тума пулăшаççĕ.

Çакăн пирки хуртсем пыл та ытларах пуçтараççĕ. «Сеятель» колхоз кăçал, хуртсем валли хăварнă пыла шутламасăр, кашни вĕллерен 40 килограмм таран пыл илнĕ. Клевер ÿсекен участок çывăхĕнче йывăçсем пулсан та клевер вăрлăхĕн тухăçлăхĕ пысăкрах пулать, мĕншĕн тесен сăпса йывăç сулхăнне юратать, вăл та опылени тума пулăшать.

Çак ĕçсене республикăри кашни колхозах тума пултарать. 1945 çулхи çуркунне тата çулла колхозсене вăрлăхлăх хăваракан участоксене уйăрма, вĕсене пăхса усрама пулăшмалла. Çак ĕçсене çĕрĕç органĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен манмалла мар.

Клевер вăрлăхĕ тума уйăрнă участоксене колхозсенче япăх çемçетеççĕ. «Сеятель» колхозра 1944 çулхи çуркунне, уя тухма май пулсанах, клевер вăрлăхĕ тумалли участока 5 центнер кăмака кĕлĕ тăкнă. Иртнĕ çулсенче, минераллă удобренисем пулнă чухне, ăшăнса пыракан çĕр çине суперфосфатпа кали тăварĕ те сапнă. Азот удобренийĕ клевера кирлĕ мар.

Кăмака кĕлĕнче кали тата фосфор пур, çавăн пирки те кĕл клевер вăрлăхĕн тухăçлăхне ÿстерме пулăшать. «Сеятель» колхозăн çак опычĕ, хĕллехи вăхăтра колхозсенче кĕл ытларах пухса, ăна çуркунне клевер участокĕ çине кăлармалли кирли çинчен калать. Вăрлăх участокĕсене çу хушшинче 2—3 хут çумласа, çум курăксенчен тасатмалла.

«Сеятель» колхозра клевер вăрлăхĕ пысăк тухăçлă пулни клевера вăхăтра пухса кĕртсе, вăхăтра çапса пуçтарнинчен те килет. Клевера ÿстерсе ăна пултарни—çур ĕç кăна. Клевера тивĕçлипе пухса, çапса шĕкĕлчениччен пĕтĕм ĕç килет. 1944 çулта «Сеятель» колхозра клевер вăрлăхĕн участокĕсене августăн 20-мĕшĕ тĕлне вырса пуçтарнă. Ăна çурлапа вырса кĕлтесем туса çыхнă. 4—5 кун хушши кĕлтесене уйра типĕтнĕ хыççăн, сентябрĕн 2-мĕшĕнче ăна турттарса çапма пуçланă. Çапассине ахаль молотилкăпа çапнă. Çав вăхăтрах колхозниксен пĕр ушкăнĕ молотилка хыççăн тухнă клевер пучахне клеверотерка витĕр кăларнă. Юлашкинчен вара вăрлăха клейтоппа сăварса тасатнă. Çапла ĕçлесе, колхоз клевер вăрлăхне типĕ вăхăтра тасатса пуçтарнă.

Колхоз клевер арпине те сая ямасть. Клевер арпине пĕтĕмпех витнĕ ÿплене хунă. Колхозра 40 центнер таран клевер арпи пухăннă. Халĕ унпа сыснасене тăрантараççĕ. Клевер арпин кашни килограммĕ пĕр килограмм лайăх сĕлĕпе танлашать.

Тырпулсене пухнă вăхăтра, авăн çапнă чухне вăрлăх нумай çухалнине хăшпĕр колхоз руководителĕсем асра тытмаççĕ. Хăшпĕр районсенче ку тарана çитсе те клевер йышши курăксене çапса, вăрлăхĕсене шĕкĕлчесе хатĕрлемен.

Уборка вăхăтĕнче, çапнă вăхăтра нумай вăрлăх çухалать. Уççăнах çапла калама пулать: курăка çапассине хĕллеччен хăварни, курăк тымарта пулнă чухнехипе шутласан, вăрлăхăн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне çухатать, хăшпĕр чухне 90 процента çити те çухалать.

«Сеятель» колхозра 30 пăт таран клевер вăрлăхĕ туса илни çакна кăтартать: колхоз председателĕ Андреев тата Масловпа Павлов бригадирсем курăк акса ÿстерсе вăрлăх туса илесси çинчен ВКП(б) Обком бюровĕпе Совнарком кăтартса панисене тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Г. МАРТЫНОВ.

ВКП(б) Обком секретарĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04282. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. д. Тираж 16.000 экз.